Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

12 (8176) № ✻ Юн кун, 2014 çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 19-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Пĕтĕмлетӳ

## Вĕсем – ырă тĕслĕхре

Район 70 çул тултарнă тĕле районти предприятисемпе организацисем, ял тăрăхĕсем хушшинчи экономика ăмăртăвне пĕтĕмлетнĕ. Унпа килĕшӳллĕн ял хуçалăх предприятийĕсем хушшинче пĕрремĕш вырăна «Путь Ильича» агрофирма тухнă. Ăмăрту условийĕсемпе килĕшӳллĕн ĕç коллективĕ 1-мĕш степеньлĕ диплома тата 12 пин тенкĕ укçан парнене тивĕçрĕ. Иккĕмĕш вырăнта – Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕ (2-мĕш степеньлĕ диплом тата 8 пин тенкĕ укçан парне). Виççĕмĕш вырăнта – Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕ (3-мĕш степеньлĕ диплом тата 5 пин тенкĕ укçан парне). «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики лайăх ĕçленине палăртнă.

Промышленность тата тирпейлекен предприятисем хушшинче пĕрремĕш вырăна «Муркашри кирпĕч завочĕ» хупă акционерлă общество (1-мĕш степеньлĕ диплом тата 12 пин тенкĕ укçан парне) тухнă. Иккĕмĕш вырăнта – Муркаш райповĕ (2-мĕш степеньлĕ диплом тата 8 пин тенкĕ укçан парне). Виççĕмĕш вырăнта – «Сеспель» предприяти (3-мĕш степеньлĕ диплом тата 5 пин тенкĕ укçан парне). А. Вязов индивидуаллă предприниматель лайăх ĕçленине палăртнă.

Ял тăрăхĕсем хушшинче пĕрремĕш вырăна Ярапайкасси ял тăрăхĕ (1-мĕш степеньлĕ диплом тата 12 пин тенкĕ укçан парне) тухнă. Иккĕмĕш вырăнта – Хорнуй ял тăрăхĕ (2-мĕш степеньлĕ диплом тата 8 пин тенкĕ укçан парне). Виççĕмĕш вырăнта – Катькас ял тăрăхĕ (3-мĕш степеньлĕ диплом тата 5 пин тенкĕ укçан парне). Москакасси ял тăрăхĕ лайăх ĕçленине палăртнă.

**Хамăр инф.**

## Сывлăх кунĕ

***Çитес шăмат кун, февралĕн 22-мĕшĕнче, пирĕн республикăри пур муниципалитетра та Сывлăх кунĕ иртет. Çавна май пирĕн районти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК уçă алăксен кунне irтерме палăртнă. Спорта юратакансем çак кун ФСК-на килсе тĕрлĕ услугăна тӳлевсĕр майпа тивĕçме пултараççĕ.***

**Хамăр инф.**

Муркаш ен 70 çул тултарчĕ

## Районăн хисеплĕ çыннисен ретĕнче




***Иртнĕ эрне кун «Муркаш районĕн хисеплĕ гражданинĕ» ята тивĕçнисен йышĕ ӳсрĕ. Район кунĕнче çак чыса Николай Александрович Гусак (вилнĕ хыççăн), Владимир Федорович Григорьев, Владимир Александрович Бакшаев, Василий Егорович Соловьев (вилнĕ хыççăн), Меркурий Борисович Ягунов тивĕçрĕç.***

***– Ĕмĕрĕме купăса та халăха халалларăм, – тет паян Чăваш композиторĕсен ассоциацийĕн членĕ М. Ягунов (сăн ӳкерчĕкре). Тăрăшуллă ĕçĕпе ЧР тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕн, музыка обществин тава тивĕçлĕ çыннин ятне тивĕçнĕ ветеран.***

***Ăсталăхпа тăрăшулăха пĕр çыхха çыхса кĕвĕ хыççăн кĕвĕ шăрçаланă самантсенче, çамрăксемпе концерт хыççăн концерт лартнă чух, каççерен ял çыннисем умне тухса купăс сассипе вĕсен пурнăçне илем кӳнĕ, çĕнĕлле ĕçлеме хавхалантарнă вăхăтсенче яланах тăван район пирки шутланă вăл. Çак шухăшсемпе районăн малашлăхне пăхнă.***

***Районăн 70 çулхи юбилейне уявланă пирки хаçатăн 4 – 5 страницисенче паллашма пултаратăр.***

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Видеоконференци

## Пушар хăрушсăрлăхĕ шухăшлаттарать

Февралĕн 15-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев видеоконференци мелĕпе республикăри муниципалитет йĕркеленĕвĕсен тата хула округĕсен пуçлăхĕсемпе канашлу ирттернĕ.

Чрезвычайлă лару-тăрăвăн республикăри патшалăх комитечĕн председателĕ Вениамин Петров пĕлтернĕ тăрăх кăçалхи февралĕн 14-мĕшĕ тĕлне республикăра пушарсен хисепĕ иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан 22,7 процент, пушарта вилекенсен шучĕ 42,1 процент ӳснĕ.

Пушарсен тĕп сăлтавĕсем шутĕнче çаксем: юсавсăр кăмакасемпе усă курни (50 тĕслĕх), электрооборудованипе усă курмалли правилăсене пăсни (38), уçă çулăмпа усă курнă чухне асăрханусăр пулни (29). Вут-çулăмра вилнĕ 27 çынран 13-шĕ ӳсĕр пулнă. Пушарсен шучĕ Хĕрлĕ Чутай, Вăрнар, Пăрачкав, Тăвай районĕсенче палăрмаллах ӳснĕ.

Канашлура асăннă районсенче пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерессипе мĕнле ĕçсем туса ирттернĕ пирки ку районсен администрацийĕсен пуçлăхĕсен отчечĕсене итленĕ. Вĕсем палăртнă тăрăх районсенче пушар хуралĕн сотрудникĕсем ял çыннисемпе тĕл пулаççĕ, килĕрен çӳреççĕ, профилактика информаци материалĕсем валеçеççĕ.

Республика Пуçлăхĕ çавна палăртнă. «Туса ирттерекен ĕçсен эффективлăхне çирĕп анализ туни кирлĕ. Çынсен хăрушсăрлăхне тивĕçтересси – пирĕн ĕçĕн тĕп пĕлтерĕшĕ», – тенĕ вăл.

Пурлăха пушартан страхлассин ыйтăвне пысăк тимлĕх уйăрнă. Михаил Игнатьев асăрхаттарнă тăрăх çынсемпе йĕркелекен тĕл пулусене страхлакан компанисен представителĕсене анлăрах явăçтармалла. Пурлăха страхлани пĕлтерĕшлĕ пулнине конкретлă тĕслĕхсемпе кăтартса парас пулать.

Республикăра 2013 çулта Пĕрлехи информаци кунĕсене ирттерни тата 2014 çулхи плансем пирки Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертӳçи Александр Иванов каласа панă. Иртнĕ çул актуаллă 36 темăпа Пĕрлехи информаци кунĕсене 9 ирттернĕ, граждансен 241 ыйтăвне пăхса тухнă. Çынсене ытларах çул тăвассин тата юсассин, медицина услугисемпе тивĕçтерессин, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тата вĕренӳ ыйтăвĕсем интереслентереççĕ.

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

## Пĕлтерĕшлĕ ыйтусем тавра

Республикăри ытти районсенчи пекех, пирĕн районта та паян Пĕрлехи информаци кунĕ иртет. Юлашки вăхăтра йăлана кĕнĕ тăрăх информаци кунĕпе çыхăннă тĕл пулусене ĕç çынни коллективĕсенче пур ял тăрăхĕсенче те йĕркелеме палăртнă.

Пĕрлехи информаци кунĕн темисем анлă. Тĕл пулусенче çак ыйтусем тавра калаçусем пулĕç:

– Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Владимир Путинăн 2013 çулхи апрелĕн 22-мĕшĕнчи 375 № «Раççей Федерацийĕнче Культура çулталăкне ирттерессси çинчен» Указне пурнăçласси çинчен;

– Чăваш Енĕн иртнĕ çулхи социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн малтанхи пĕтĕмлетĕвĕ çинчен тата республикăн 2013 çулхи бюджетне пурнăçлани çинчен;

– Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. Игнатьев республика Патшалăх Канашне 2014 çул валли янă Çырăва пурнăçлассипе Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕсен пĕрлехи ĕçĕсен комплекслă планĕ çинчен;

– чрезвычайлă лару-тăрăва асăрхаттарассипе тата пĕтерессипе, пушар хăрушсăрлăхне тата шыв объекчĕсем çинчи хăрушсăрлăха тивĕçтерессипе туса ирттермелли ĕçсем çинчен. Çынсене пушар хăрушсăрлăхĕн правилисем пирки каласа парасси;

– Раççей Федерацийĕн пенси системинче туса ирттерекен çĕнĕлĕхсем çинчен.

Республикăран района Пĕрлехи информаци кунĕ ирттерме Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕн çумĕ Ирина Кошкина ертсе пыракан ушкăн килет.

Тĕл пулусен кун йĕркине кĕртнĕ ыйтусем пирки калаçнипе пĕрлех информаци ушкăнĕсен членĕсем ял çыннисене интереслентерекен ыйтусене те хуравлĕç.

## Ăмăрту старта чĕнет

Районта февралĕн 22-мĕшĕнче Социализмла Ĕç Геройне Е.А. Андреева асăнса районта мала тухассишĕн йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне ирттереççĕ. Ăна хатĕрленсе ирттерме район администрацийĕн йышăнăвĕпе йĕркелӳ комитечĕ туса хунă. Ăна райадминистраци пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев ертсе пырать.

Февралĕн 18-мĕшĕнче йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕ иртрĕ. Ăна комитет председателĕ Ростислав Тимофеев ертсе пычĕ. Ларура ăмăртăва хатĕрленсе ирттерессипе ответлисен тивĕçĕсене çирĕплетсе тухрĕç.

Ростислав Николаевич палăртнă тăрăх кашниех хăйĕн тивĕçне кирлĕ пек пурнăçлассишĕн ответлăха туйни пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Ăмăртăва çӳллĕ шайра ирттерес тесен положенипе пăхнă пур условие те кашниех çирĕп пурнăçлани кирлĕ.

## 90 çул – сумлă çул

Мăн Токшикри Анастасия Павлова çак кунсенче 90 çул тултарчĕ. Çавна май юбиляр чыслакансен ушкăнне йышăнчĕ. Ăшă сăмах чылай пулчĕ, вăл шутра РФ Президенчĕн В. Путинăн, район администрацийĕн тата ытти шайри ĕçченсен саламĕ, асăнмалăх парне, чĕрĕ чечек çыххи кăмăл-туйăма çемçетрĕ. Çулĕпе сумлă пулин те, Анастасия Викторовна çирĕп те вăрвар. Алă усса лармасть вăл, хăйне валли тăтăшах тĕрлĕ ĕç тупать, май килнĕ таран ыттисене пулăшать. Кичеммĕн ларма хăнăхман çав ырă кинемей. Сумлă уява юбиляр пĕр пӳлĕмлĕ хваттерте паллă тума хатĕрленет.

## Паттăр ентеше халалласа

Уйкас Янасал ял тăрăхĕнче Совет Союзĕн Геройне Яков Анисимова халалланă спорт ăмăртăвĕсем иртрĕç. Кунта хутшăнакансем волейболла, шашкăлла, шахматла выляреç, çавăн пекех кире пуканĕ йăтассипе тупăшрĕç. Ваçкасси ялĕн спортсменĕсем волейбол ăмăртăвĕнче чи маттуррисем пулчĕç, куçса çӳрекен кубок вĕсенче юлчĕ. Уйкас Апашпа Сосновка командисем иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăна тухрĕç. Кире пуканĕ йăтассипе тата шашкăлла выляссипе Уйкас Апашри К. Васильев чи маттурри пулчĕ. Çапла вара пĕтĕмĕшле шутлавра Уйкас Апашсем чи хисеплĕ пĕрремĕш вырăна тухрĕç. Спортсменсене саламлама тата хавхалантарма район пуçлăхĕ И. Николаев тата çак ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С. Никифорова килсе çитрĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ, Р. ИЛЛАРИОНОВА хатĕрленĕ.**

Çырăнтару – 2014

## Хаклă вулаканăм!

**Эсĕ район хаçатне кăçалхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма сырăнма манман-и? Аса илтеретпĕр: ăна март уйăхĕнчен илсе тăма сырăнма май пур. Малашне те пĕрле пуласчĕ!**

**Райхаçат редакцийĕ.**

Саламлатпăр



Пирĕн юратнă та хисеплĕ çыннăмăра, аннене, малтан нумай çул Йӳтĕркассинче, халĕ Муркаш салинче пурăнакан **Мария Ивановна МАТВЕЕВĂНА** сумлă юбилейпа – 90 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Эсĕ пурри – пысăк телей, савăнăç. Яланах хальхи пек ырă кăмăллă, хастар пул. Чир-чĕр тата хуйхă-суйхă санран яланах пăрăнса иртчĕр. Турри сана нумай çул пурăнма çирĕп вăй-хал патăр. Пурăн эсĕ савăнса ачусемпе, мăнуксемпе, кĕçĕн мăнуксемпе.

**Саламлаканĕсем: 2 ывăлĕпе 2 кинĕ, 2 хĕрĕпе кĕрӳшĕ, 6 мăнукĕ, 7 кĕçĕн мăнукĕ, чĕререн хисеплекен тăванĕсем, пускилсем.**

# Иртни ырă туйăм çуратать

Район 70 çул тултарнă май

Мĕн-ха хаклă пирĕн пурнăçра? Çынпа тĕл пулни, курса калаçни чуна савăнтарать, асра юлать, ăстăна пуянлатать. Çулсем кайнă май çакна уйрăмах лайăх туйса илетĕн. Хăй вăхăтĕнчи пултаруллă та хастар çынсемпе курнăçни вара уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Иртнĕ кунсенче çавăн пек çынсемпе тĕл пулма тӳр килчĕ манăн. Кусем вĕсем Римма Михайловнăпа Алексей Петрович Петровсем. Иккĕшĕ те тыл ĕçченĕсем. Хисеплĕ çак мăшăр хамăр районти Катăкуй ялĕнче пурăнать.

Алексей Петров 1928 çулта çуралнă. Çамрăклăх çулĕсем вăрçă вăхăтне лекнипе ыттисенни пекех çăмăл пулма пултарайман. 6-мĕш класра вĕреннĕ чухнех лашапа хиртен кĕлтесем те турттарнă, çурлапа тырă та вырнă. Ача çулĕсенчех хушнă ĕçе пĕр пăркаланмасăр пурнăçлама хăнăхнă.

Вăл вăхăтра колхозра ĕçлекенсене тырă-пулă паман çулсем те пулнă. 1941 – 1946 çулсенче те тырра ытларах патшалăха ăсатнă. Чи малтанах фронтшăн тăрăшмалла пулнă. Ачалăх çулĕсенче çĕрĕк çĕр улми крахмалне те, шĕшкĕ кăчкине те пĕçерсе çиме тивнине питĕ лайăх астăвать Алексей Петрович халĕ те.

1948 çулта Алексея çар ретне илеççĕ. 4 çул хушши танк командирĕ пулса службăра тăрать вăл. 1952 çулта яла таврăнсан вулав çуртне ĕçлеме çирĕплетеççĕ. Çулталăкранах ял Совет депутатне суйлаççĕ. Пултаруллă çамрăка район шайĕнче те асăрхаççĕ. Хыççăн ăна КПСС Муркаш райкомĕн инструкторĕнче ĕçлеме чĕнсе илеççĕ. 3 çул хушши тăрăшать кунта вăл.

Çав çулсенчех Шупашкарта партин аслă шкулне вĕренсе пĕтерет. Вăл вăхăтра коммунистсен партийĕн Тĕп Комитечĕ 30 пин яшкĕрĕме ял хуçалăхне çĕклеме ярасси пирки хушу кăларать. Вĕсен шутне Алексей Петрович та лекет.

1957 çулта Алексей Петрова хăй çуралнă Шетмĕпуç тăрăхне ĕçлеме яраççĕ. Ун чухне кунта кашни ялтах хăйне тĕллĕн пĕр колхоз пулнă. 1950-мĕш çулсенче колхозсене пĕрлештерсе 3 колхоз йĕркеленĕ. Алексей Петрович Шетмĕпуç, Карманкасси тата Катăкуй ялĕсене пĕрлештерекен Калинин ячĕллĕ колхоза ертсе пыма пуçăнать.

Ун чухне ку колхоз питĕ начаррисен шутĕнче пулнă. Тырри-пуллине кашни гектартан вăтамран 4 – 5 центнертан ытла пухса илеймен. Кӳршĕллĕ пуянрах колхозсенчен тырă кивçенле илме тивнĕ. Ĕçе тухакансене куллен пĕрер килограмм çăнăх панă.

Ĕçе пĕлсе йĕркелесе пынипе, дисциплинăна çирĕплетнипе, çынсемшĕн тăрăшнипе Алексей Петрович кĕске вăхăт хушшинчех юлса пыракан колхоза аталану çулĕ çине кăларма пултарать. Çавна кура Турханпа Сарчак ялĕсенчи колхозсем те ку хуçалăхпа пĕрлешеççĕ. Çапла вара Мичурин ячĕллĕ колхоз йĕркеленет.

Колхозсенче пурнăç майĕпен йĕркеленсе-майлашăнса пынă пулин те, ял çыннисен пурнăç условийĕсем япăх пулнă-ха. Хуçалăхсенче те ĕçлемелли-тумалли сахал мар пулнă. Никама та çăмăл килмен. Чи малтанах выльăх-чĕрлĕх сарайĕсене çĕнетмелле пулнă. Кая юлмасăр кивĕ çуртсене пăсса пысăкрах çĕнĕ сарайсем тутарнă, çийĕсене улăм витнĕ. Пĕчĕк пăрусене ял çыннисен килти витисенче те усрама тивнĕ.

1958 çулта Хĕрлĕ Чутай вăрманĕнчен çăка касса килсе хуппине сӳсе шыва хутнă, курăс тунă. Колхозниксем çав курăсран хĕл каçа чăпта çапнă. Чăптине ял çыннисенчен 40 пуспа пуçтарса Горький хулине илсе кайса 70 пуспа сутнă.

– Çапла вара ерипен колхозниксене ĕçленĕшĕн уйăхсерен укçа тӳлеме тытăнтăмăр, – аса илет халĕ çав çулсене Алексей Петрович. – Муркаш МТС-ĕ колхоза пĕр комбайнпа тепĕр трактор парса пулăшатчĕ, анчах та ку çителĕксĕрччĕ. Тырă-пулăн ытларах пайне çурлапа вырса пухма тиветчĕ.

1959 çулта Муркаш районне пĕтернĕ май колхоз Элĕк районне кĕрет. Кайран вара Шупашкар районне лекет. Çак пăтрашуллă вăхăт колхозсене ăнăçлă аталанма чылай чăрмав кӳрет. 1964 çулта Муркаш районне çĕнĕрен йĕркелеççĕ.

1961 çулта ялсене электричество çитет. Колхозра хăма çурмалли пилорама хута яраççĕ. Электричество пулни чылай йывăр ĕçе çăмăллатма май парать.

Кĕркунне колхоз çĕр улми сутса тиев турттармалли автомашина туянать. Тепĕр çулне вара укçа пухса кустăрмаллă трактор туянма май çитереççĕ.

Çав вăхăт халĕ те Алексей Петровичăн куçĕ умĕнче:

– Тинех кăшт сывлăш çавăрса ятăмăр. Кăштах техника пекки пур темелле. Хĕллехи вăхăтра колхозниксене Атăл урлă вăрман касса йывăç хатĕрлеме яма пуçларăмăр. Пурăна киле малтанхи вăхăтра йывăçран, кайрантарахпа тимĕр-бетонран, кирпĕчрен те выльăх-чĕрлĕх витисемпе сарайĕсене çĕклерĕмĕр. Выльăх-чĕрлĕх йышне те çуллен ӳстерсе пытăмăр.

Ерипен колхоз районта малти хуçалăхсен ретне тăма пуçлать. Уйрăмах выльăх-чĕрлĕхрен продукци илессипе вĕсен кăтартăвĕсем ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăма тытăнаççĕ.

Ӳсен-тăран продукцийĕ туса илессипе те Шетмĕпуçсем япăх мар кăтартусем тăваççĕ. 1970 – 1972 çулсенче тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсене кашни гектартан вăтамран 30 центнера, çĕр улмине 250 – 300 центнера яхăн пухса кĕртме тытăнаççĕ. 1972 çулта Мичурин ячĕпе хисепленекен колхоз Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртăва хутшăнса чи пысăк кăтартусем тунăшăн КПСС Тĕп Комитечĕн, СССР Министрсен Совечĕн, ВЦСПС-ăн тата ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне, укçан премие тивĕçет.

Çав çулсенчех колхоз татах пысăкланать – Тивĕш, Автанкасси тата Опрыскьял ялĕсем те Мичурин ячĕллĕ колхозпа пĕрлешеççĕ. Пĕрлешӳллĕ хуçалăх аталанса çирĕпленсе пырать. Колхоз вăйĕпех Янăш ялĕ патне çити асфальт çул сараççĕ. Халĕ ĕнтĕ Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи кашни ял патнех асфальт çулпа çитме пулать.

1975 – 1976 çулсенче Мичурин ячĕпе хисепленекен колхоз харпăрлăхĕнче 40 трактор, 40 автомашина, 14 комбайн шутланнă. Аш-какай, сĕт туса илессипе хуçалăх ăнăçуллă ĕçленĕ. Вăл вăхăтра колхозниксем пĕрлешӳллĕ хуçалăхри ĕçсене килти вырăнне хурса тăрăшнă.

Хăйĕн хастар ĕçĕпе Алексей Петрович 4 орден илме тивĕçнĕ. Кусем вĕсем Октябрь Революцийĕн, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав, Халăхсен туслăхĕн тата «Хисеп Палли» орденĕсем. Муркаш тăрăхĕнче ун чухне çĕр-шывăн кун чухлĕ наградине тивĕçнисем сахал пулнă.

23 çула яхăн ĕçленĕ вăл хуçалăх ертӳçинче. 1979 çулта сывлăхĕ хавшанипе «Ударник» хуçалăхăн ун чухнехи ертӳçине Александр Михайлович Михайлова тăван тăрăхне килме, хăйĕн вырăнĕнче ĕçлеме ыйтнă. Çапла вара А. Михайлов Мичурин ячĕпе хисепленекен колхоз председателĕнче ĕçе кӳлĕнет.

Кайран А. Петров Муркаш райповĕн председателĕнче ĕçе пикенет, пенсие кайиччченех, 10 çул хушши кунта ăнăçуллă тăрăшать. Пултарулăхне вăл çĕнĕ ĕçре те туллинех кăтартма пултарать. Вăл ĕçленĕ вăхăтра райпо системинче куллен кирлĕ таварсен 20 ытла магазинне уçаççĕ. Магазинсенче ял çыннисене кирлĕ строительство материалĕсемпе тивĕçтерессине йĕркелеççĕ. Потребкооперации отличникĕн паллине парса чыслаççĕ ăна.

Халĕ Алексей Петрович 86 çулта. Апла пулин те обществăлла ĕçсене активлă хутшăнать.

Унăн мăшăрĕ Римма Михайловна Красноармейски районĕнчен, 1931 çулта çуралнă. Вăрнарти совхоз-техникумран вĕренсе тухсан ăна 1948 çулта выльăх тухтăрĕнче ĕçлеме Муркаш районĕнчи Шетмĕпуçĕнчи ветеринари участокне янă. Кунта вăл пĕр улшăнмасăр 43 çул тăрăшнă. 1953 çулта Алексей Петровичпа пĕрлешсе çемье çавăрнă.

Ветеринари участокĕ кивĕ юхăннă çуртра вырнаçнă пулнă. 1958 çулта ветучасток çĕнĕ хăтлă çурта куçнă.

Малтанхи вăхăтра хальхи пек йĕркеллĕ çулсем пулман. Фермăсен территорийĕсенче пушшех те пылчăклă пулнă. Çуркунне юр кайнă вăхăтра Римма Михайловна ялсене юлан утпа çӳренĕ. Çав çулсенче Мичурин ячĕпе хисепленекен колхозра кăна ĕне выльăх 1800 пуç, сысна 3000 пуç, сурăх 800 пуç таран, чăх-чĕп чылай усранă. Кунсăр пуçне халĕ Элĕк районне кĕрекен «Новый путь» хуçалăхри Какаç, Мăн Шĕвĕш, Кĕçĕн Шĕвĕш ялĕсене те çитме тивнĕ. Мăн Шĕвĕшре те пысăк фермăсем пулнă. Хамăр районти «Ударник» хуçалăхри Тури Панкли, Анатри Панкли, Хурăнкасси ялĕсенче те ĕне, сурăх, сысна, чăх-чĕп фермисем пулнă. Вĕсене пурне те Шетмĕпуçĕнчи ветеринари участокĕнче вăй хуракан выльăх тухтăрĕсен çитсе çӳремелле пулнă.

Выльăх тухтăрĕн ĕçĕ епле йывăр пулнине эпĕ хамăн мăшăр Нина Яковлева та выльăх тухтăрĕнче ĕçленĕ май питĕ лайăх пĕлеттĕм. Вĕсен ĕç кунĕ вĕçленсен те яла каймалли тупăнатчĕ. Тепĕр чухне каçхине те чирлĕ выльăх патне кайма лекетчĕ.

Эпĕ ветеринари участокне ялапах çӳренĕ. Римма Михайловна ертсе пынипе выльăх тухтăрĕсем çуллахи вăхăтра яланах вăрмана кайса сиплĕ эмел курăкĕсем пуçтаратчĕç. Çав курăксене типĕтсе чирлĕ выльăхсене сиплеме усă курнă.

Римма Михайловна патне выльăх тухтăрĕ пулма вĕренекенсем сахал мар практикăна килетчĕç. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ветеринари врачĕ» хисеплĕ ята та, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденне те тивĕçнĕ, Мускавра халăх хуçалăх çитĕнĕвĕсен куравĕнче те пулнă. Шетмĕпуçĕнчи ветеринари участокĕ районта яланах малти вырăнсенче шутланнă.

Римма Михайловнăпа Алексей Петрович Петровсем хĕр çуратса ӳстернĕ. Халĕ вăл Шупашкарта пурăнать. Мăнукĕ Алексей Ладыков ответлă вырăнта тăрăшать.

Çак хисеплĕ мăшăр паянхи кун та алă усса ĕççĕр лармасть. Хăнăхман вĕсем ун пеккине. Килти хуçалăхра Петровсем чăх-чĕп, сурăхсем тытаççĕ. Çемье çавăрни вара вĕсен 60 çул çитрĕ. Ырлăх-сывлăх сунса эпĕ вĕсенчен тулли кăмăлпа уйрăлтăм.

**Илья ЯКОВЛЕВ.**



**Сăн ӳкерчĕкре: районти ветеринарсен, техник-осеменаторсен ушкăнĕ районти канашлура. Р.М. Петрова малти ретре сулахайран пиллĕкмĕшĕ.**

Юбилей

## Саламлатпăр



Хисеплĕ те хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, аттене, кукаçие, шăллăма, тăвана – Мăн Шаптак ялĕнче пурăнакан **Иван Петрович ПАВЛОВА** сумлă юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал сунатпăр, телейпе ăнăçу юнашар çӳреччĕр, ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр, çемьере татулăхпа килĕшӳ пулччăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ ывăлĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕ, икĕ аппăшĕ, йыснăшĕ тата çывăх тăванĕсем.**

Пирĕн хаклă çыннăмăрсене – Мулкачкасси ялĕнче пурăнакан **Наталия Владимировнăпа Владимир Анатольевич СМЕЛОВСЕНЕ** пĕрлешнĕренпе 20 çул çитнĕ ятпа чун-чĕререн саламлатăп. Çавăн пекех вĕсемпе пĕрле пурăнакан **Клара Александровна СМЕЛОВĂНА** та 80 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатăп. Çирĕп сывлăх сунатăп, çемьере яланах килĕшӳ хуçалантăр, Турри вĕсене чир-чĕртен упраса тăтăр.

**Салампа: Пиккикассинчи тăхлачи Галя.**

Çĕр ыйтăвĕ

## Усă курмастăн – штраф тӳле

Февралĕн 15-мĕшĕнче Федерацин 2014 çулхи февралĕн 3-мĕшĕнче йышăннă 6-ФЗ № «Раççей Федерацийĕн административлă майпа правăна пăснин кодексне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккунĕ вăя кĕчĕ. Унпа килĕшӳллĕн ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе тĕллевлĕ усă курманшăн административлă майпа штраф парассин виçисене самай пысăклатнă.

Çĕнĕ саккунпа ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе ял хуçалăх продукцийĕ туса илме усă курмаççĕ пулсан малашне штраф виçине палăртнă чухне çĕр участокĕн кадастр хакне шута илме тивĕç. Штраф виçисене çапла майпа палăртĕç:

– **уйрăм граждансен** – çĕр участокĕн кадастр хакĕн 0,3 процентĕнчен тытăнса 0,5 процентне таран, анчах та 3 пин тенкĕрен кая мар;

– **должноçри çынсен** – çĕр участокĕн кадастр хакĕн 0,5 процентĕнчен тытăнса 1,5 процентне таран, анчах та 50 пин тенкĕрен кая мар;

– **юридици вăйĕнчи предприяти-организацисен** – çĕр участокĕн кадастр хакĕн 2 процентĕнчен тытăнса 10 процентне таран, анчах та 200 пин тенкĕрен кая мар.

Штрафăн чи пысăк виçине те палăртнă – вăл 500 пин тенкĕрен ытла пулма пултараймасть.

Тĕслĕхрен, Шупашкар районĕнчи Çĕньял ял тăрăхĕн территорийĕнчи 21,6 гектар çĕр лаптăкĕн кадастр хакĕ 607342 тенкĕпе танлашать. Çак çĕр участокĕпе усă курманшăн юридици вăйĕнчи предприяти-организацие паракан штраф виçи 200 пин тенкĕпе танлашать. Вăрманкас Çĕктер ял тăрăхĕнчи 1,47 гектар йышăнакан çĕр участокĕпе усă курманшăн (кадастр хакĕ 40574 тенкĕ) уйрăм гражданинăн 3 пин тенкĕ штраф тӳлеме тивĕ.

Аса илтеретпĕр. Çĕнĕ саккун вăя кĕриччен ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе палăртнă вăхăт хушши ял хуçалăх производстви валли усă курман пулсан граждансене 2 пин тенкĕрен тытăнса 5 пин тенкĕ таран, должноçри çынсене 4 – 6 пин тенкĕ, юридици вăйĕнчи предприятисемпе организацисене 80 пин тенкĕрен тытăнса 100 пин тенкĕ таран административлă штраф пама пултарнă.

Асăннă çĕнĕ саккун вăя кĕнĕ май йĕркене пăснăшăн РФ административлă майпа правăна пăснин кодексĕн 8.8 статйин 1.1 пайĕпе килĕшӳллĕн явап тыттарма пăхнă пулсан, кун пек ĕçсем тĕлĕшпе Россельхознадзорăн должноçри çыннисен те йышăну тума полномочи пур.

**Чăваш Республикин Росреестр управленийĕн пресс-служби.**

# Муркаша тĕнче шайне çĕкленĕ



Олимп чемпионки Валентина Егорова çуралнăранпа февралĕн 16-мĕшĕнче 50 çул пулчĕ. В. Егорова – спортсменка, СССР тава тивĕçлĕ спорт маçтăрĕ, тĕнче класлă спорт маçтăрĕ.

Валентина 1964 çулта Муркаш районĕнчи Исетерккĕ ялĕнче çуралнă. Вăл Сосновкăри тĕп шкулта вĕреннĕ. Волгоградри физкультура институтне вĕренсе пĕтернĕ. Унăн пĕрремĕш тренерĕ – Раççейĕн тава тивĕçлĕ тренерĕ Геннадий Васильев.

1988 çулта Валентина пĕрремĕш хут СССР-ăн пĕрлештернĕ командине кĕме пултарать. Унăн пĕрремĕш пысăк ăмăртăвĕ 1990 çулта Сплит хулинче иртнĕ Европа чемпионачĕ пулать. В. Егорова унта кĕмĕл медаль çĕнсе илет, мала тухнă спортсменкăран 5 çеккунт кăна кая юлать. 1991 çулта Лондонри марафонра виççĕмĕш тухать. Пысăк çĕнтерӳсем вара – малалла. Марафон дистанцине чупассипе Валентина 25-мĕш Олимп вăййисен (1992 ç., Барселона хули) çĕнтерӳçи пулма тивĕçет. 1993 тата 1994 çулсенче Токиори марафонра пĕрремĕш пулать, 1995 çулта çав ăмăртурах иккĕмĕш вырăн çĕнсе илет. 1994 çулта Валентина Егорова Бостонри марафона та хутшăнать. Унта вăл иккĕмĕш вырăн кăна çĕнсе илет пулсан та, унăн результачĕ – 2 сехет те 23 минут та 33 çеккунт – вăл тата Раççей спортсменĕсем кăтартнă чи лайăх результат пулать.

26-мĕш Олимп вăййисенче (1996 ç., Атланта хули) марафон дистанцийĕнче кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ. Тĕнче кубокĕнче темиçе хутчен мала тухнă. В. Егорова карьеринчи юлашки пысăк çитĕнӳ 1999 çулти Наганори марафонри пĕрремĕш вырăн пулнă.

В. Егорова Шупашкар тата Токио хулисен Хисеплĕ гражданинĕ. Ăна иккĕмĕш степень «Тăван çĕр-шыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орден медалĕпе тата «Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орденпа наградăланă.

Пирĕн районта В. Егорова ячĕпе çулсеренех çăмăл атлетика ăмăртăвĕ иртет.

Афганистанран пирĕн çарсене кăларнăранпа 25 çул çитнĕ май

# Комбатпа рядовойсем паян та пĕрле

Нарăс уйăхĕн 15-мĕшĕнче Совет çарĕсене Афганистан Республикинче 10 çула тăсăлнă вăрçăран илсе тухнăранпа чĕрĕк ĕмĕр çитрĕ. Асăннă куна кăçал район шайĕнче те паллă тумасăр хăвармарĕç. Çав тĕллевпе асăннă вăрçăна хутшăннисене иртнĕ шăмат кун район администрацийĕн ларусем ирттермелли залне пухрĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев çак кун интернационалист салтаксемпе, çав вăрçăра пуç хунисен ашшĕ-амăшĕсемпе тата тăванĕсемпе, вăрçăран таврăнсан мирлĕ вăхăтра пурнăçран вăхăтсăр уйрăлнă юлташĕсен мăшăрĕсемпе пĕр йышра пулчĕ.

Район администрацийĕпе интернационалист салтаксен районти канашĕ ирттернĕ асăну кунĕ пирки малалла тĕплĕнрех. Çамрăк вăхăта приказа пурнăçласа вăрçă вутне кĕнисем асăну кунĕ тенине хирĕçлемеççĕ пулĕ.

### САЛТАКСЕМ

Район администрацийĕ умне палăртнă вăхăта пухăннă интернационалист салтаксем килсе çитнĕ кашни юлташне ытама илсе йăл кулăпа кĕтсе илеççĕ. Çаксене курса сывлăх сунсан Ю. Трофимов афганец çăмăл автомашинăпа лартса килнĕ тата çавăтса пыракан Ю. Татарова **(сăн ӳкерчĕкре)** куççульне пытараймарĕ, аллисем чĕтрерĕç, тути тытăнчăклăн пăшăлтатрĕ: «Манăн Алешăна тавăрма çук ĕнтĕ. Юрать-ха эсир çав вăрçă вутĕнчен таса-сывă тухрăр, аçу-аннӳсем патне таврăнтăр». Юлия Федоровна ларусем ирттермелли зала иртнĕ май пухăннисем те ун хыççăн пĕр çын пек тапранчĕç.

Пирĕн çарсене Афганистанран кăларнăранпа 25 çул çитнине паллă тума салтак сăмахлăхĕнчи пек комбатпа рядовойсем çак кун пĕрле пухăнчĕç. Урăхла епле-ха? Çамрăклах çĕр-шыв приказне пурнăçланă чух та вĕсем пĕр йышра пулнă-çке: комбат рядовой салтака, кĕçĕнни аслăраххине, вăйли вăйсăррине юлашки юн тумламĕччен хӳтĕленĕ.

– Афганистанри çар операцийĕсем Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинчен 2 хут ытларах тăсăлчĕç, пирĕн пин-пин салтакăн пурнăçне вăхăтсăр татрĕç. Вăл вăхăтра совет çарĕн 40-мĕш армийĕ пирĕн çĕр-шывăн кăнтăр чиккисене наркотиксем çул уçасран, экстремизм килсе кĕресрен хӳтĕлессипе çар операцийĕсене хутшăнчĕ. Сирĕнпе пĕрле эпир хамăртан мĕн килнине пурнăçларăмăр. Куенпе пирĕн чун-чĕре хамăр çĕр-шыв умĕнче таса. Анчах кирек хăш вăрçă та çухатусемсĕр пулмасть. Муркаш районĕнчи 7 çамрăк Тăван çĕр-шыв интересĕсене хӳтĕлесе район историне çырăнса юлчĕ, – терĕ пухăва уçнă май Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссарĕ А. Кочуров. Александр Алексеевич хăй те асăннă çар операцийĕсене хутшăннăран пухăннисем унăн сăмахĕсене чуна илсе итлерĕç, юхан шыв леш енчи вăрçăра пуç хунисене пĕр минут шăп тăрса асăнчĕç.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев хăйĕн сăмахĕнче чĕрĕк ĕмĕр каялла çамрăклăха вăрçă вутĕнче ирттернĕ салтаксем паян та стройра пулнине палăртрĕ.

– Эсир Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă паттăрсен эстафетине хăвăр алла илсе çамрăк ăрушăн ырă тĕслĕх пулса тăтăр. Тавах сире ялан малти ретре пулнишĕн, ыттисене хăвăр ĕçĕрпе ӳсĕмсем тума хавхалантарнишĕн, – терĕ Ростислав Николаевич салтак амăшне Юлия Федоровна Татаровăна чечек çыххи парнеленĕ май. – 1989 çулхи нарăс уйăхĕн 15-мĕшĕнче Афганистан çĕр-шывĕнчи вăрçă пирĕншĕн вĕçленчĕ. 40-мĕш арми ертӳçи Б. Громов генерал чикĕ урлă юлашки каçса пирĕн салтаксем унта юлманни пирки хыпарларĕ. Нумай ашшĕ-амăшĕ кĕтрĕ çак куна. Юхан шыв леш енчи вăрçă вара паян та асрах. Ун пирки сирĕнтен ытларах никам та каласа параймĕ.

Интернационалист салтаксен районти канашĕн ертӳçи В. Киршев хăйĕн сăмахĕнче рядовой салтакăн паттăрлăхĕ çинче чарăнса тăчĕ. «Ĕнер çеç кĕрепле-сенĕкпе утă тавăрма-пуçтарма çӳренĕ шкул ачисем салтак форми тăхăнса Тăван çĕр-шыва присяга парсан ăна тивĕçлипе пурнăçлама пултарни пире паян савăнтарать. Хыççăнхи ăру та çак çулпах пырасса шанатăп», – терĕ вăл.




Пухăннисене вĕсен паттăрлăхне чысласа Муркаш шкулĕнче вĕренекенсем ташă-юрă, паттăрсем çинчен çырнă сăвăсем парнелерĕç.

### ПАТТĂРЛĂХ

– Вăхăт пире суйласа илчĕ те эпир хамăр ята ямарăмăр, атте-аннепе ытти тăванăмăр умĕнче йывăрлăхран хăраса пит хĕретмерĕмĕр, – терĕ пухăннисене медальсемпе чысланă май вăрçă инваличĕсен республикăри обществăлла организацийĕн ертӳçин çумĕ К. Петров. Çакăнта И. Васильев интернационалист салтак калани те чĕрене хускатрĕ: «Пирĕнтен нумайăшне çамрăклăхри вăхăтсăр вилĕмрен килте атте-анне, хамăр çуралса ӳснĕ тăрăхри тантăшсемпе савнисем кĕтни сыхласа хăварчĕ тесе шутлатăп».

Пирĕн районта çуралса ӳснĕ 7 çамрăк çав вăрçă вутĕнче приказа пурнăçласа каялла чакмасăр паттăррăн куçĕсене хупрĕ: А. Татаров, М. Самойлов, Н. Перцев, Ю. Тарасов, А. Порфирьев, Н. Михеев, В. Николаев. Паттăрсене асăнса Москакассинче лартнă палăк умне те çитрĕç çав кун ветерансем. «Вĕсем пирĕншĕн яланах çамрăк юлĕç тата паттăрлăх тĕслĕхĕ пулĕç», – терĕ асăну митингĕнче палăк умне чечек кăшăлĕ хунă май район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев.

Сывă юлнисем вăхăтсăр пуç хунă юлташĕсене тивĕçлипе асăнни вара паттăрлăх мар-и?

**А. БЕЛОВ.**

# «Тăрăшулăх ялан малта пулнă»

Хамăн ĕç тăпхăрĕнчи аса илӳсене эпĕ малалла тăсатăп. 1965 çултан пуçласа 1970 çулччен районти ял хуçалăх управленийĕн ертӳçинче К. Сазонов тимлерĕ, анчах йывăр чире пула пирĕнтен пĕр эрне хушшинчех уйрăлчĕ. Питĕ пысăк çухату пулчĕ çакă пуриншĕн те.

Тĕп тĕллев ял хуçалăх ĕçĕпе питĕ тачă тимлесси пулнă. Никамшăн та вăрттăнлăх мар, вăл вăхăтра хуçалăхсене çӳреме çул-йĕр çук вĕт. Çапла вара çуран утма та тивнĕ, май килнĕ чухне тракторпа ларса кайнă.

Управление ертсе пыма каярахри çулсенче Шупашкар хулинчен тепĕр икĕ çынна ярса пачĕç, вĕсем нумаях та ĕçлемен, çавăнпа палласах та юлайман. Паллах, район историйĕ пирки калаçнă чухне ял хуçалăх управленийĕн тĕп агрономĕ, каярах вара управлени ертӳçи пулнă Е. Александров çинчен асăнмасăр иртме çук. Вăл 1918 çулта çуралнă, Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннă. Ефим Александрович питĕ ăслă-тăнлă тата пултаруллă пулнипе хуçалăх ертӳçисене, агрономĕсене, ытти специалиста нумай вĕрентетчĕ. Ун хыççăн «Передовик» совхоза малти рете кăларнă ертӳçĕне В. Краснова управление ертсе пыма шанчĕç.

Пултаруллă ертӳçĕсем мĕн пур специалистран çирĕп ыйтатчĕç, яланах ответлăха туйма хистетчĕç. Çуллахи хĕрӳ ĕç тапхăрĕнче тăватă-пилĕк сехетсенче колхозсене çитсе килетчĕç, сакăр сехетре вара ял хуçалăх управленийĕнче канашлу ирттеретчĕç. Районти кашни уйхирти лару-тăрăва ун чухнехи специалистсем питĕ аван пĕлсе тăнă тесен йăнăшмăп эпĕ. Çавăнпа авторитет та пысăк пулнă. Каярахпа вара управлени ертӳçисем татах та улшăнчĕç. Унта вăй хунă чылай ĕçчен ӳсĕм хыççăн ӳсĕм туса аслă ертӳçĕре тимлерĕ.

Ветеринари станцийĕн тĕп врачĕ М. Миронов, ял хуçалăх управленийĕн тĕп инженерĕ И. Бушуев пирки халĕ те вăл вăхăтри специалистсем ырăпа асăнаççĕ, ĕçлеме вĕрентнишĕн тав тăваççĕ.

Çавăн пекех Н. Васильев, Л. Софронов, Р. Пушкина тĕп зоотехниксем, А. Борисова, В. Любимова планпа экономика пайĕн ертӳçисем, А. Порфирьев, А. Ефимова тĕп бухгалтерсем, И. Андреев, каярахпа В. Ярухин тата Н. Атамов çĕр йĕркелӳçисем ырă сăмаха чăннипех те тивĕç. Вĕсем шутлав, отчет ĕçĕ çине тимлĕх уйăрма, тĕрлĕ анализ тума вĕрентнĕ. Вăл вăхăтра хуçалăхри экономика кăтартăвне уйăхра, кварталта, çулталăкра хатĕрленĕ. Пилĕк çуллăхрине вара уйрăмах тĕплĕ тишкернĕ. Кадрсен пайне И. Андреев, каярахпа И. Крысин, унтан М. Пафнутьева ертсе пынă. Ял хуçалăхĕн профсоюз райкомĕн председателĕнче Т. Калитов тимленĕ.

Социаллă ăмăрту тата пилĕк çуллăх çĕнтерӳçисем, ВДНХ-на хутшăнакансем чылайăн пулнă. Вĕсене ятарлă

Район 70 çул тултарнă май



паллăпа чысланă, ытти ĕçченсемшĕн ырă тĕслĕх пулнă. Çитĕнĕве çирĕплетекен удостоверенисене хăшĕпĕри упрама та пĕлмен пулĕ, çавна май «Ĕç ветеранĕ» ята илнĕ чухне усă курайман. Тĕрлĕ мероприяти ирттернĕ чухне профсоюз нихăçан та аякра юлман.

Манăн вара çак саманта та палăртса хăварас килет. Район территорийĕнчи «Ромашка» пионер лагерьне тунă çĕре те хутшăннă эпир. Çурт-йĕр пулмалли территорие палăртнă ĕнтĕ, йывăç-тĕм касса тирпейленĕ. Çакна йăлтах районти çĕр ĕçĕн йĕркелӳçи Г. Любимов ертсе пынă. Ял хуçалăх управленийĕн ĕçченĕсем çакăнта питĕ нумай тăрăшнă, çавăн пекех районти ытти организацисем те пуçарулăхпа палăрнă. Субботник шучĕпе пĕрлехи мероприятирен аякра пулман. Чун хушнипе, ответлăха туйнипе обществăлла ĕçе питĕ активлă хутшăннă. Пĕтĕмĕшле илсен вара ун чухнехи коллективсем чăннипех те туслă пулнă, пĕрпĕриншĕн тăрăшнă, хисепленĕ. Кашни эрнере субботник тунă, çулçăллă милĕксем касса хатĕрленĕ. Тĕп ĕçсĕр пуçне темĕн тĕрлĕ мероприятие хутшăннă.

**А. АНИСИМОВА,**
**ĕç ветеранĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: «Ромашка» пионер лагерьне тума хутшăннисем.**

# Пĕр тĕллевпе ĕçлеме пултаратпăр

**Район кунне уявланинчен**



**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев район экономикин выставкипе, социаллă пурнăç аталанăвĕпе тĕплĕн паллашрĕ, районăн малашлăхĕ пуррине палăртрĕ.**

Районăмăр кунĕ ячĕпе ирттернĕ савăнăçлă лару кăçал нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнче К. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш академи драма театрĕнче иртрĕ. Палăртнă вăхăта пур ĕç коллективĕсен делегацийĕ те уяв залне пухăнса çитрĕ. Халăх йышлă çӳремелли вырăнсенче районти культурăпа архив ĕçĕсен пайĕ йĕркеленĕ куравсем, культура ĕçченĕсен юрри-кĕвви, Муркашпа Мăн Сĕнтĕр райповĕсем пуçарнă суту-илӳ тата кунти техĕмлĕ кукăль шăрши уяв чапне ӳстерчĕç кăна.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи кĕрленĕ вăхăтра 1944 çулхи нарăс уйăхĕнче çĕнĕ тытăмра пĕрремĕш утăм тунă Муркаш ен паян чылай ĕçре ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăрать. Çапах кая хăвармасăр татса памалли ыйтусем те çук мар-ха пирĕн. Çакна районăмăр 70 çул тултарнине халалласа ирттернĕ пухура район пуçлăхĕ И. Николаев тата район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев тунă докладсем те кăтартса пачĕç. Республика Пуçлăхĕ М. Игнатьев савăнăçлă пухăва хутшăнса хăй Муркашсене шаннине уйрăм тĕслĕхсемпе çирĕплетсе каланă сăмахĕ ăна итлекенсенче малашлăха шантаракан çутă ĕмĕт-тĕллев çуратмалла пулчĕ тесе шутлатăп.

Михаил Васильевич Муркашсен ĕç кăтартăвĕсене лайăх пĕлнине палăртнипе пĕрлех уява хатĕрленĕ куравпа иртсе пирĕннисен ĕçĕпе кăмăллă юлнине палăртрĕ.

– Эсир мĕнле ĕçленине пĕлетĕп тата курса тăратăп, анчах паянхи куравпа паллашни сирĕн малашлăх туртăмĕ пысăккине çирĕплетет. Çак çулпа пырсан эсир çывăх вăхăтрах экономика аталанăвĕнче çĕнĕ ӳсĕмсем тăвасси пирки манăн паян пĕр иккĕленӳ те çук, – терĕ вăл кураври экспонатсемпе паллашнă май.

…Вăхăт çитнипе район пуçлăхĕ И. Николаев уява пуçласси пирки пĕлтерчĕ, килнĕ хăнасемпе, уяв йĕркипе паллаштарчĕ. Хыççăн Игорь Васильевич пухăннисене районăмăр юбилейĕпе саламласа кĕскен унăн историйĕпе, аталанура тарăн йĕр хăварнă ентешсемпе, вĕсен ĕçне малалла тăсса вăй хуракан паянхи ĕçченсемпе, çамрăксен тĕллевĕсемпе паллаштарчĕ.

– Муркаш ен – пирĕн пĕрлехи кил. Пирĕнтен чылайăшĕ кунта çуралса ӳснĕ, çемье çавăрнă, ача-пăча çуратса тивĕçлĕ воспитани парса пурнăç çулĕ çине кăларнă. Район аталанăвĕнче пиншер çын шăпи, вуншар пин çыннăн ырми-канми ĕçĕ. Çавăнпа та тăван килĕмĕр малашне татах илемлĕрех те хăтлăрах пултăр, унăн экономикăпа социаллă аталанăвĕ çĕнĕ хăвăртлăхпа малалла кайтăр тесе тимлесси – пирĕн умри пĕрлехи тĕллев. Раççей Президенчĕ В. Путин вырăнти хăй тытăмлăха аталантарассине патшалăхăн тĕп задачисенчен пĕри тесе палăртрĕ. Вырăнти хăй тытăмлăхăн граждансене çӳлти хушусене кĕтмесĕрех ытларах ыйтăва хăй тĕллĕн татса пама çул уçса памалла. Район паян çак енпе ĕçлесе пырать те, – терĕ савăнăçлă пухăва уçнă май район пуçлăхĕ И. Николаев.

Уявра тĕп докладпа район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев паллаштарчĕ. Хăйĕн сăмахĕнче Ростислав Николаевич районăн экономикăпа социаллă пурнăçне, ĕç коллективĕсен мал туртăмлăхне, вĕсем ĕçре тунă ӳсĕмĕсене уйрăм кăтартусемпе, ыттисемшĕн тĕслĕх пулакансене ятран палăртрĕ. Унăн сăмахĕнчен çакă куç умне тухрĕ.

Аслă ăрурисем района йĕркеленĕ, атте-асаттесем хаяр вăрçă çулĕсенче тăшмана çĕнтернĕ, вĕсен эстафетине алла илнисем район экономикине аталантарнă, ял пурнăçне тĕреклетнĕ. Вĕсен кашнин пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ – район историйĕ. Пирĕн тăрăхри 34 пин ытла çын – районăн тĕп пуянлăхĕ. Вĕсем çанă тавăрса ĕçленипех районăмăр республиăкра ырă тĕслĕхпе аталанать. Тĕрлĕ çулсенче район аталанăвне А. Ивамов, П. Журавлев, В. Краснов, Л. Софронов, В. Рубцов, П. Давыдов т. ыт. те пысăк тӳпе хывнă.



**Васкассинчи информаципе культура центрĕн ертӳçи Наталия Ильина ЧР Культура, наци ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министерствин Хисеп грамотине тивĕçрĕ. Кашни ĕçрех пуçарулăхпа палăрать вăл, ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăрать.**

Районăмăр ял хуçалăх продукцийĕ туса илессипе специализациленет. Иртнĕ çул ял хуçалăх продукцийĕ туса илесси паянхи хаксемпе 2009 çулхинчен 38 процент ытларах пулни эпир ĕçлеме пултарнине çирĕплетет. «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики, Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕ, «Путь Ильича» агрофирма хăйсен мал туртăмлă ĕçĕпе ял хуçалăхĕнче вăй хуракансемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ.



**Хăнасене Муркашсем ташă-юрăпа кĕтсе илеççĕ.**

Районти промышленность предприятийĕсен аталану потенциалĕ пысăкки куç умĕнчех. Юлашки 5 çул хушшинче промышленность продукцийĕ туса кăларасси 5,5 хут ӳссе иртнĕ çул пĕтĕмĕшле 1 миллиард та 796 миллион тенкĕне çитрĕ. Кунта уйрăм сăмах – «Сеспель» хупă акционерлă общество (ертӳçи В. Бакшаев) пирки. Кунта тавар туса кăларас ӳсĕм 3 çул хушшинче çеç 23 процент пысăкланнă. Иртнĕ çул предприяти 848 çурма прицеп туса кăларнă. Акционерлă обществăра паянхи кун 514 çын вăй хурать. Вĕсем хушшинче В. Казаков тĕп энергетик, В. Шелков мастер, В. Васильев электрогазосварщик, металл сăрлакан Л. Апроськина ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ.



**Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендиачĕсем – хастар çамрăксем. Вĕсен аллинче – тăван ен пуласлăхĕ.**

# Пĕр тĕллевпе ĕçлеме пултаратпăр

Район кунне уявланинчен



Кашмашра пурăнакан Аленăпа Юрий Замятинсем район кунĕнче ача амăш капиталĕн хуçисем пулса тăчĕç. Пирĕн ялсенче çакăн пек çамрăксем пурăнни районăн малашлăхĕ пуррине çирĕплетет.

Ĕçлекенсен пултарулăхне кура «Муркашри кирпĕч завочĕ» уçă акционерлă общество та экономика рынокĕнчи аталану шайĕнчен юлмасть. 2009 çулхипе танлаштарсан продукци туса кăларасси кунта 2,4 хут ӳсрĕ. Уйрăм ĕçченсене илсен Г. Ершова, В. Максимов, Г. Нодыкова тăрăшулăхне палăртмалла. Асăннă предприяти халĕ çĕнĕ ӳсĕмсен чиккине çĕнессипе тимлет.

«Сундырь–Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн (ертӳçи Л. Ильгечкин) ĕçĕ – эффективлăх тĕслĕхĕ. Кунта паян продукцин 160 ытла тĕсне кăлараççĕ. Çĕнĕ тĕллевсемпе пурăнакансене çулсерен 35 миллион тенкĕлĕх продукци кăларни ĕç тĕллевĕсем пурнăçран илнисемех пулнине çирĕплетет.

Район аталанăвĕнче суту-илӳ сферипе обществăлла апатлану аталанса çĕнĕ сăн илни те айккинче тăрса юлаймасть. Тавара ваккăн сутассипе пĕтĕмĕшле тавар çаврăнăш иртнĕ çул 5 çул каяллахинчен 1,8 хут пысăкрах пулчĕ, 1 миллиард та 76 миллион тенкĕпе танлашрĕ. Нумай çул потребкооперацие аталантарассипе Мăн Сĕнтĕр тата Муркаш райпо ертӳçисем Л. Майкова, Б. Андреев ăнăçлă ĕçлесе пыраççĕ.

Юлашки çулсенче район аталанăвĕнче пĕчĕк тата вăтам бизнес тӳпи ытларах та ытларах вăй илсе пырать. Вĕсем çĕнĕ технологисене алла илессипе тăрăшуллă пулнипе кăларакан продукци конкурентлăхне ӳстереççĕ, хушма ĕç вырăнĕсем туса параççĕ.



Лантăш пекарнинче район 70 çул тултарнине халалласа ятарлă çăкăр пĕçерни эпир çăкăр-тăвара мала хуни пирки калать.

Халăха тӳлевлĕ пулăшу парассинче пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх услугисем, халăха çут çанталăк газĕпе тивĕçтерессипе тĕп вырăнта тăраççĕ.

Районта пурăнмалли çурт-йĕр, социаллă сфера объекчĕсем, çулсем тăвасси пысăк масштабпа пырать. Иртнĕ çул инвестици ĕçхĕлне аталантарма тĕрлĕ çăл куçри укçа-тенкĕне 1,5 миллиард тенкĕне яхăн явăçтарнă. Ку вăл 5 çул каяллахинчен 8,4 хут нумайрах. Çак çулпа кайса асăннă тапхăрта нумай хваттерлĕ 6 çурт хута яма май килчĕ. Кунта «Моргаушская» МСО пирки ырă сăмах каламасăр иртме çук.

Инноваци тата инвестици проекчĕсене реализацилес ĕçре вĕрентӳпе спорт, сывлăх, культура учрежденийĕсем пуçарулăх кăтартаççĕ. Ăслă та сывă, çирĕп ачасемсĕр малашлăх çук. Хастар спортсменсем, тăрăшуллă шкул ачисем, халăх сывлăхĕшĕн тăрăшнă тата паян та ырми-канми ĕçлекенсем, халăхăмăр хушшинчи культурăна çĕклекенсем кашниех тав сăмахне тивĕç.

Предприятисен тăнăç аталанăвĕнче ĕç укçи – тĕп вырăнта. Ăна çамрăк специалистсене майлăрах тăвас тесе юлашки 5 çул хушшинче районти вăтам ĕç укçи шайне икĕ хут ытла ӳстерме май килчĕ. Ку ĕçе эпир малалла та аталантарăпăр...

Савăнăçлă лару-тăру умĕн те, ун вăхăтĕнче те, пуху хыççăн та зал тулашĕнче Муркашсен пултарулăхне курма, пирĕн ăсталăхпа паллашма килнисем татăлмарĕç.



Районăн паллă çыннисем (сулахайран сылтăмалла): «Юман» обществăн гендиректорĕ М. Бычков, «Аккортехпроект» институт ертӳçи Г. Абросеев, КПСС обкомĕн 1-мĕш секретарĕ пулнă А. Петров, филологи наукисен докторĕ Л. Сергеев.

– Муркаш ен пĕр вырăнта тăмасть. Çакна эпир куратпăр. Сирĕнтен тĕслĕх илсе хамăр тăрăх аталанăвне «вут хурас тетпĕр». Пурнăç уттинчен юлас мар тесен пирĕн сирĕнтен вĕренмелли нумай. Сире вара малашнехи экономика аталанăвĕнче татах та сумлăрах ӳсĕмсем тума сĕнетĕп, – терĕ пирĕн районпа çывăх пулнине тĕслĕхсемпе çирĕплетсе Шупашкар район администрацийĕн пуçлăхĕ Г. Егоров.

Производство мал туртăмлă аталанни районта вĕрентӳпе спорт тытăмне те, халăх сывлăхне тивĕçлĕ пăхса тăрассине те çĕнĕ технологисен шайĕнче пурнăçа кĕртсе пыма пулăшать. Çак ĕçре çамрăксем маттур пулни, вĕсенчен уйрăмах хастаррисем ЧР Пуçлăхĕн стипендине тивĕçни çирĕплетет. Район кунĕнче вĕсене савăнăçлă лару-тăрура стипендиат пулнине çирĕплетекен хут пачĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев районти предприятисем, организацисем тата учрежденисем хушшинчи экономика ăмăртăвĕнче 2013 çул пĕтĕмлетĕвĕпе çĕнтернисене çак ятпа дипломсем, укçан парнесем тата вымпелсем парса чысларĕ.

Çак кун Муркашсем çине Хисеп грамотисемпе Тав çырăвĕсен «çумăрĕ» çурĕ тесен те йăнăш пулас çук. Кашни ĕçчен хăй тивĕçнĕ наградăна алла илчĕ, юлташĕсене вĕсен ӳсĕмĕшĕн савăнса саламларĕ.

Хамăр уява çак кун тăван районти культура ĕçченĕсем савăк ташă-юрăпа хăт кĕртрĕç, илемлетрĕç, çĕнĕ ӳсĕмсем тума хавхалантарчĕç.

Сăмахăма вара Чăваш Республикин Пуçлăхĕ каланипе вĕçлес тетĕп, вăл пирĕнтен кашнинех пырса тивет. «Эсир хăвăра хăвăр хисеплеме пултаратăр, Муркашсем вăйлă, хастар, çирĕп те ĕçчен. Эсир критикăлама пĕлни тата хăвăра критикленине йышăнма пултарни – ырă пулăм. Сире малашне те пĕр çемьери пек шăкăл-шăкăл пурăнма ырлăх-сывлăх та телей сунатăп», – терĕ М. Игнатьев хăйĕн сăмахĕнче.



Сцена çинче арçынсен ушкăнĕ илемлĕ юрă шăрантарать.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

# Пĕр кунта çуралчĕç çемьесем

ЗАГС пайĕнче

Нарăс уйăхĕнче çветуй Валентин кунне уявланă май район администрацийĕн ырă йăласен залĕнче ултă мăшăр çемье çавăрчĕ. Çак паллă та илемлĕ датăллă кун – 2014 çулхи нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнче çамрăксем пĕр-пĕрне юратса, килĕшсе пĕрлешни çинчен пĕлтерчĕç, алла документ илсе уяв ирттерчĕç.

Пурнăçăн чи пĕлтерĕшлĕ уявне, çут тĕнчере çĕнĕ çемье чăмăртаннине, нихăçан та асран каймасла паллă тăвасси – кашнин ĕмĕчĕ.

Эхветкасси ялĕнчи Лариса Толстовăпа Чамăш ял каччи Михаил Блинов ЗАГС-ра çак кун хăйсен юратăвне ытти мăшăртан малтан çирĕплетсе алла документ илчĕç. Курма килнĕ хăнасем тăвăллăн алă çупса саламларĕç вĕсене, чечек çыххисем парса телей сунчĕç.

Вĕсем хыççăн Мендельсон маршĕпе Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Ирина Яковлевăпа Михаил Алексеев çемье йĕркеленине çирĕплетсе алă пусрĕç. Çак çамрăк мăшăр çичĕ çул ытла пĕр-пĕрне юрататъ мĕн. Юратакансен кунĕнче – ятарлă датăра çырăнма шутланă вĕсем. Кунĕ вара тĕлĕнмелле ăшă пулчĕ, вĕсен туйăмĕсем пекех. Нарăс уйăхĕ яланах шартлама сивĕ çанталăкпа паллă, çак кун вара тумлам та тумларĕ, çумăрĕ те пĕрĕхсе илчĕ – чăн çуркунне! Машина сигналĕсене пусса тин çеç йĕркеленнĕ Алексеевсен çемйи туй уявне малалла тăсма Шупашкар хулине тухса вĕçтерчĕ.

Кăçал пирĕн район каччисем хăйсем килĕштернĕ пикесене – Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар тата ытти район хĕрĕсене Муркаш кинĕсем турĕç.

Паллах, нумай чух туй уявне канмалли кунсенче ирттереççĕ, анчах та мăшăрланакансемшĕн ЗАГС алăкĕсем вырсарни кунсăр пуçне кашни кунах уçă. Пĕр мăшăра савăнăçлă лару-тăрура регистрацилеме çур сехет уйăраççĕ. Алă пусса документ илме, мăшăрланнă хыççăн пĕрремĕш вальс ташлама, сăн ўкерчĕксем ўкерĕнме вăхăт çителĕклипех.

Юратса, хисеплесе, пĕр-пĕрне ăнланса пурăнсан ылтăн туйччен те пĕрле пурăнма пулать.

**О. ПАВЛОВА, ЧПУ студентки.**

**Сăн ўкерчĕкре: Алексеевсен çемйи.**



Шкулчченхи вĕренў учреждениĕсенче

## Ăшă кăмăлпа тимлĕх – пĕчĕкренех




Урамра хĕл кунĕсем хуçаланаççĕ. Сивĕ çанталăкра урамра чылай вăхăт тытăнса тăрас та килмест, ăшă çĕртех лайăх. Анчах та вĕçен кайăксемпе пирĕн тăват уралла туссем сивĕ кунсене мĕнле чăтса ирттереççĕ-ши? Паллах, вĕсем йывăрлăха кĕрсе ўкеççĕ, çавăнпах пирĕнтен пулăшу кĕтеççĕ, анчах пирĕн хушăра çакна асăрхаса пулăшакансем сахал.

«Солнышко» ача садĕнче ĕçлекен педагогсем вара ăшă кăмăллă та ыттисемпе тимлĕ пулма ачана пĕчĕкренех вĕрентсе пымалла тесе шутлаççĕ. Çак тĕллевпех пирĕн садикра «Килти чĕр чунсем» темăпа ятарлă эрнелĕх иртрĕ. Темĕнле ĕç те туса ирттертĕмĕр садикра. Килти чĕр чунсем çинчен ачасем нумай пĕлчĕç.

Пĕрремĕш ушкăна çўрекен ачасем килте юратнă тусĕсем пурри çинчен, вĕсем хăйсене мĕнле тытнине, мĕн çинине тата ыттине те каласа пачĕç. Ачасем патне хăнана «кушак» килчĕ. Ачасем унпа пĕрле савăнчĕç, юрласа ташларĕç, выляр̆ĕç.

Ашшĕ-амăшĕсем пулăшнипе вара «Пирĕн юратнă туссем» стена хаçачĕ кăлартăмăр. Вĕçен кайăксене пулăшас тĕллевпе сырăшсене тăтăшах апат хурса пама калаçса татăлчĕç ачасем.

**Е. КРОЛИКОВА, В. ЯСТРЕБОВА, воспитательсем.**

## 15 команда хутшăнчĕ

Физкультура учителĕнче тăрăшнă Герман Осипова асăнса тата ăна сума суса ирттерекен волейбол ăмăртăвĕ ку таранччен çулсеренех Ярославка ял тăрăхĕн шайĕнче иртнĕ. Кăçал вара ăна район шайне çитерме май тупрĕç. Çапла февралĕн 8-мĕшĕнче иртнĕ вăйăсене кăçал 15 команда пухăнчĕ.

Ăмăрту тенине спорт тенипе çыхăнтаратпăр, анчах та çакăн пек кашни ăмăртурах истори страницисем куç умне тухаççĕ. Нискассинчи вăтам шкулти спортзалта та ăмăрту умĕн Г. Осипов çинчен презентаци (ăна мăшăрĕ хатĕрленĕ) кăтартни пĕлтерĕшлĕ пулнине каламалла.

Командăсем нумай пулнине кура вĕсем икĕ спортзалта выляр̆ĕç: Нискассинчи шкулта тата «Моргаушская» МСО спортзалĕнче. Районти шкулта вĕренекенсен командисенчен пуçласа Шупашкарти «ОМОН» команда таранах пуçтарăнни, паллах, вăйăсем хĕрў пуласса шантарчĕ.

Вăйăсем кунĕпех тăсăлчĕç. Çĕнтерўçĕсен вăййисене каçалапа кăна курма май пулчĕ. Вĕсене курас тесе чăтăмсăррăн кĕтни хăйне тўрре кăларчĕ. Интереслĕ те сăнама илемлĕ вăйăсенче хайхи «ОМОН» команда çĕнтерчĕ, 2-мĕш вырăна Шупашкар хулинчи шалти ĕçсен пайĕн волейболисчĕсем çĕнсе илчĕç. «Нискасы» команда 3-мĕш вырăна тухма пултарни вара кăмăла самаях хăпартрĕ. Вăйăсенче тĕрлĕ номинацире палăртса уйрăм вылякӑнсене те чысларĕç.

**Ярославка ял тăрăхĕн администрацийĕн специалисчĕсем.**

Культура хыпарĕсем

## Район пурнăçĕпе паллашаççĕ

Сосновкăри ялти вулавăшра нарăс уйăхĕнче «Чечеклен, юратнă Муркаш ен!» курав-портрет ĕçлеме пуçларĕ. Ку курава Муркаш районĕ 70 çул тултарнине халалланă. Курава тĕрлĕ иллюстрацие тăван район ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштаракан кĕнеке вырнаçтарнă. Тĕрлĕ тĕслĕ сăн ўкерчĕк çинче илемлетнĕ Чăваш Ен картти, Муркаш районĕн Гербĕ тата Гимн сăмахĕсем пур. Çавăн пекех хамăр районти паллă çынсем çинчен çырса кăтартнă тĕрлĕ кĕнекепе тата брошюрăпа паллашма пулать. Вĕсем хушшинче Купăрля ялĕнче çуралса ўснĕ ăсчах, истори наукисен докторĕ, паллă этнограф, чăвашсен пĕрремĕш «Хыпар» хаçатне йĕркелекенĕ Н.В. Никольский çинчен кăларнă çĕнĕ кĕнекесемпе те. Раççей паттăрне Е.Г. Борисова, ĕç паттăрĕсене Е.А. Андреева, О.Ф. Федоровăна тата Совет Союзĕн Геройĕсене халалланă кĕнекесем çўлĕксем çинче сумлă вырăн йышăнаççĕ.

Кăçал Раççей çĕр-шывĕнче Культура çулталăкне ирттернĕ май куравра хамăр районта ўссе çитĕннĕ çыравçăсемпе поэтсен кĕнекисемпе усă курнă. Курава çавăн пекех хамăр районти илемлĕ вырăнсен сăн ўкерчĕкĕсем, чăваш наци çи-пуçĕ тумлантарнă пуканесем, асам эрешлĕ тĕрĕсем илем кўреççĕ. Кашни кунах çак тулли те илемлĕ куравпа вулавăша килекенсем хаваспах паллашаççĕ.

Уйрăмах тăван районăн юбилейне халалланă курав шкул ачисемшĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ. Вĕсем çак кунсенче тăван район çыннисем çинчен кĕнекесем вуласа, тĕрлĕ альбом курса тĕплĕнрех паллашаççĕ. Унсăр пуçне хамăр пата килекенсене районти тавра пĕлўçĕсемпе çыравçăсем çинчен кăларнă электронлă презентаципе те тăтăшах паллаштаратпăр.

Вулавăша кĕрисчченех пирĕн пата килекенсем илемлĕх тĕнчипе тĕл пулаççĕ. Çак кунсенче фойере Кашмаш шкулĕнче вĕрентекен Марс Димитриевăн картинисенчен йĕркеленĕ «Юратнă тăван ен» курав ĕçлеме пуçларĕ. Кураври ытарма çук илемлĕ 27 пейзаж чуна тыткăнлать. Килсе курăр, савăнса паллашăр!

**Т. СТЕПАНОВА, Сосновкăри ялти вулавăш ертўçи.**

## «Вĕçсе килĕр, апатланăр»



**Çак ятпа Сыпайри пĕтĕмĕшле пĕлў паракан тĕп шкул çумĕнчи шкул çулне çитмен ачасен «Пыл хурчĕсем» ушкăнĕнче ятарлă акци иртрĕ: ачасемпе ашшĕ-амăшĕсем тăрăшсах кайăксем валли сырăшсем хатĕрлерĕç. Сырăшĕсем пĕри тепринчен илемлĕрех, хăтлăрах, чаплăрах... Сырăшсене пурте пĕрле çакрăмăр. Çакнă вăхăтра вара тупмалли юмахсен тупсăмĕсене те тупрăмăр, ачасем сăвăсем те каларĕç.**

**Çак хаваслă уява ирттерме пулăшнăшăн ашшĕ-амăшĕсене пысăк тав сăмахĕ калатпăр. Малалла та ачасене тĕрлĕ енлĕ аталантарас тесе пĕрле туслăн ĕçлессе шанатпăр.**

**В. АБРАМОВА, воспитатель.**

Йыхрав

## Евтихий Андреев ячĕпе

Шăмат кун, февралĕн 22-мĕшĕнче, пирĕн районти Социализмла Ĕç Геройĕ Евтихий Андреев ячĕпе йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ иртет.

Чи вăйлисемпе чăтăмлисене çак стартсем тăрăх палăртĕç: 1996–1997 çулсенче çуралнисем – 10 çухрăм (яшсем), 5 çухрăм (хĕрсем); 1998–1999 çулсенче çуралнисем – 5 çухрăм (яшсем), 3 çухрăм (хĕрсем); 1995 çулта çуралнисем тата аслăраххисем – 5 çухрăм (арçынсем), 3 çухрăм (хĕрарăмсем); 40 çултан аслăрах ветерансем – 3 çухрăм (арçынсем), 2 çухрăм (хĕрарăмсем); 50 çултан аслăрах ветерансем – 3 çухрăм (арçынсем), 1 çухрăм (хĕрарăмсем).

Командăн пĕтĕмĕшле результатне вăтам шкулта вĕренекенсен – 6 яш тата 6 хĕр кăтартăвне, тĕп шкулта вĕренекенсен – 3 яшпа 3 хĕр кăтартăвне, ĕç коллективĕсен – 2 арçынпа 2 хĕрарăм кăтартăвне шута илсе палăртаççĕ.

Ăмăртăва хутшăнасси çинчен февралĕн 21-мĕшĕччен Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн администрацине 62-7-51 номерпе е район администрацийĕн вĕренўпе çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайне 63-4-65 номерпе шăнкăравласа пĕлтермелле е малтанхи заявкăна sport@morgau.cap.ru электрон адреспа ярса памалла.

Ăмăрту кунĕнче команда представителĕсем судьясен коллегине врач тата ертўçĕ алă пусса çирĕплетнĕ заявка тăратаççĕ. Ăмăртăва врач ирĕкĕсĕр хутшăнтармаççĕ. Регистраци 10 сехет те 15 минутчен пулать.

Ăмăрту 10 сехет çурăра Муркашри йĕлтĕр базинче уçăлать.

## «Росгосстрах» парнисемшĕн

Ырă йăлана кĕнĕ тăрăх февралĕн 23-мĕшĕнче, Тăван çĕр-шыв хўтĕлевçин кунне халалласа, «РОСГОССТРАХ» пĕрлешĕвĕн Чăваш Республикинчи филиалĕн куçса çўрекен кубокне çĕнсе илессишĕн волейболла выляссипе саккăрмĕш уçă ăмăрту иртет. «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексне предприятисемпе организацисен, учреждениен, ытти ĕç коллективĕсен арçынсен командисене йыхравлаççĕ. Йĕркелўçĕсем командăсен пĕр пек форма пулмаллине ăмăрту условийĕсенчен пĕри тесе çирĕплетнĕ.

Çĕнтерўçĕ командăна кубок, диплом тата хаклă парне кĕтет. Призлă вырăн йышăнакансене те парнесемпе дипломсем парса чыслĕç. Чи лайăх вылякӑнсене ятарлă номинацисенче уйрăммăн палăртĕç.

Ăмăрту савăнăçлă лару-тăрура Муркашри «Сывлăх» ФСК-ра 10 сехет çурăра пуçланать. Çур сехет маларах вылякӑнсем хушшинче шăпа яраççĕ.

## Муркашри тирта

Февралĕн 23-мĕшĕнче Муркашри вăтам шкулти тирта пĕчĕк калибрлă винтовкăран тĕл перекенсен ăмăртăвĕ иртет. Унта районти ĕç коллективĕсен командисене йыхравлаççĕ. Командăра пурĕ 5 çын пулмалла, вĕсен йышĕнче – сахалтан та пĕр хĕрарăм.

Ăмăрту 10 сехетре пуçланать.



# Сăвă-калав çырма кăмăллакансен страници



## Саламлап сана, Муркашăм!

Çитмĕл çул тултартăн эсĕ,
Савнă, хаклă Муркаш ен.
Уявпа, тăван кĕтесĕм,
Саламлатăп чĕререн!

Эс – Чăваш çĕр-шывĕн пайĕ,
Ятлă-сумлă эс паян.
Ыр яту инçе сан кайрĕ,
Мухтанатăп санпалан!

Çĕнĕлле, пĕлсе ĕçлеççĕ
Пур ĕçе те Муркашсем.
Тивĕçпех çĕнсе илеççĕ
Тава тивĕçлĕ ятсем.

Юрă-ташăпа çĕклеççĕ
Çамрăксем Муркаш чысне.
Юратса сана калаççĕ:
– Тивĕç эс мухтав ятне!

Ĕçÿсем ăнса çеç пыччăр,
Муркаш енĕм, кунсерен.
Çыннусем телейлĕ пулччăр,
Ӳс, çĕклен эс çулсерен!

Малаллах эс хĕлĕн-çăвĕн
Ут сулмаклă утăмпа.
Тепĕр çитмĕл тултарсан та
Юл-ха çамрăк чунупа!

Игорь МАЙКОВ.

Кашмаш.

## Ултав

Этемĕн чăн пурнăçĕ ултавлă,
Шап-шур тĕсе ялан вăл хуратать.
Калаçăвĕ шăв-шавлă та ытарлă,
Суялăхĕ çынна аташтарать.

Куçне-пуçне пĕлет-ха вылятма.
Урисемпе тем те пĕр кăтартма.
Аллисемпе хитрен хăлаçланмашкăн,
Итлекене хăй майлă çавăрмашкăн.

Анчах та унăн чĕринче упранĕç
Киревсĕр те каварлă шухăшсем.
Ăна пула хирĕçÿсем çуралĕç,
Çухатĕç канăçне юлташĕсем.

Пĕр айăпсăр çынна элеклекенĕн
Чĕри, сăна-ха, тикĕт пек хура.
Чĕлхи чараксăр. Вăл ура хурать.
Аркатĕ туслăха, ăна хĕрхенмĕ.

Вăл арçынна калаçрĕ нумайччен,
Пуплевĕ пулчĕ унăн ырă, çепĕç.
Çапла вара ăна чылай илĕртнĕçем
Ăна хăй майлă çавăрчĕ веçех.

Шăп çакăн пек арçыннăн пурнăç,
Хĕрарăм аллинчен тухаймĕ урăх.
Вăл хăйĕн ӳт-пĕвне йăлтваралать,
Таса чунне сутать те тĕп тăвать.

Урăх хĕрарăм питĕ илĕртсен те
Май шырăр пăрăнма унран ялан.
Сулмаксăр тӳрĕ пултăрччĕ пĕр енлĕ,
Куллен-кун хаклăр сутă ăс-хала.

САЛАМПИ.

## Ты оставил меня одну

Посвящаю мужу,
с которым мы прожили 30 лет.

Ты оставил меня одну
На закате моих лет.
Я должна нести свой крест,
Другого пути нет.

Боже, мудрости дай мне,
Стойкости как сталь.
Мы не дошли до конца пути,
И об этом мне очень жаль.

Мы полжизни с тобой прошли,
Радость, горе деля пополам.
Ты успел лишь сказать: «Прости.
Так случилось, очень мне жаль».

Раиса ЛУКЬЯНОВА.

## Парнелетĕп сана сăввăма

Люся тусăм, чуна ан çунтар,
Эс çуккишĕн сана эп манман.
Килсе кай Муркаша, тĕл пулар,
Эп сана нихăçан та манман.

Люся тусăм, хăçан тĕл пулар,
Кăмăлтан чун уçса калаçар?
Тĕл пулар Муркашра, курнăçар,
Пĕр-пĕрне юратса хаш сывлар.

Люся тусăм, кичем чĕрене,
Эс çуккишĕн çунать ман чĕре.
Хитре, капăр тумпа утнине
Пăхса тăрăп сана айккинчен.

Люся, эп тунсăхлатăп пĕччен,
Чĕрере канлĕ мар темшĕн ман.
Хăçанччен тунсăхлас сансăр ман.
«Юрататăп». Ку вăл сан сăмах.

Люся тусăм, кĕтеп эп сана,
Ăшăма çуркунне çитрĕ ман.
Манаймастăп нихçан эп сана,
Саншăнах çулăмра чĕрем ман.

## Эп тĕл пултăм савнине

Хĕллехи касçхине
Эп тĕл пултăм Настьăна.
Çăлтăрсем сÿннине
Эп сисмерĕм унпала.

Ирчченех, кăмăлтан
Ыталарăм эп сана.
Çупăрласа илнĕ чух
Сăмах патăн эс мана.

Савнă тусăм, эс ман çеç,
Килĕштерĕп сана çеç,
Пĕрлешер-и сывă чух,
Чĕресем пĕрле чухне.

Пĕрле пурăнни хĕрĕх çул,
Тапрĕç чĕресем хĕрĕх çул.
Савнипе хамăн Настьăна
Пурăнтăмăр пĕрле хĕрĕх çул.

Атте-анне пӳрнипе
Пирĕн пурнăç тăсмалла.
Эпир вĕсен пурнăçне
Татах тăсар малалла.

Ачасем те сывă пулччăр,
Çирĕп сывлăхлă çеç ӳсчĕр.
Мăнукĕсем те йышланччăр,
Пурнăçа малалла тăсчăр.

Г. ИВАНОВ.

Ятман ялĕ.

## Наян

«Ыран-ыран, паян мар», –
Çапла калать çак наян.
Яланах тăвать хăр-хар,
Йăран çинче ун мăян.

Тавлашать чăнах пĕрмай,
Алă хуралать хăй май.
Пилĕк ыратать ай-ай,
Ялан тукалать нăй-нăй.

Кукăр-макăр утkалать,
Чалăш-тĕлĕш пускалать,
Унта-кунта пăхкалать,
Хăй валли темскер шырать.

Ун тӳшекĕ мамăкран,
Вăл тăрса аран-аран.
Минтерĕ те пит çемçе,
Вăл каймасть нихçан ĕçе.

Кахал юррине юрлать:
«Ак çакăнтан ыратать».
Унта-кунта пăркалать,
Ӳтĕмне çавах тупать.

Юмахне ярать маттур,
Ĕçлесе паян тур-тур.
Шăмшак питĕ ыратать,
Черккине татах ярать.

Куç хупсан ним курăнмасть,
Чунĕ унăн ыратмасть.
Хитре тумланса каçпа
Улаха тухса утать.

Егор ВАСИЛЬЕВ.

## Анне

Аннеçĕм, эсĕ чи хакли,
Чи хитри, чи юратни.
Аннеçĕм, эс чи лайăххи,
Çĕр çинче çук сан пекки.

Аннеçĕм, юрататăп сана,
Пăсмăп санăн кăмăлна.
Итлĕп яланах сана,
Пулăн кăмăллă манпа.

## Вăрман

Ешĕл вăрман, аякран курăнан,
Хăвăн патна асамлăхупа туртан.
Кам сан пата пырать,
Вăл питĕ хытă савăнать.

Сан пата пырсан
Курăп эпĕ ялан
Пысăк йывăçсем,
Пĕчĕк кăмпасем.

Асамлă вăрманăм,
Эс ан тунсăхла, эпĕ килĕп татах.
Ешĕл тăванăм,
Часах каймăп, çӳрĕп вăрах.

## Юратнă кукамай

Кукамайăм, кукамай,
Сана чĕнетĕп эпĕ пĕрмай.
Кукамайăм, кукамай,
Эпĕ кĕтетĕп сана пĕрмай.

Сана темле чĕнсен те
Эсĕ сасă парас çук,
Сана темле кĕтсен те
Эсĕ таврăнаяс çук.

Кукамайăм, юратнă кукамайăм,
Эпĕ тунсăхлатăп сансăр çав тери.
Кукамайăм, чи хаклă кукамайăм,
Пурăнмашкăн сансăр япăх çав тери.

Вĕри яшкапа тутлă кукăльна
Çиессĕм килет манăн тепĕр хут,
Тин сунă сĕтпеле ăшă çăкăра
Çиесчĕ манăн тепĕр хут.

Çемçе аллупа пуçран ачашланине
Манса каймăп эпĕ, юратнă кукамай.
Манăн чĕппĕм тесе вăрах лăпкани
Яланах асра юлĕ, хаклă кукамай.

Н. ТИХОНОВА.

## Шурă сирень

(Юрă)

Пур яш-кĕрĕм вăйăра,
Шăппăн калаçать йăмра,
Сирень çурчĕ çеçкине...
Паллашрăмăр санпала.

**Хушса юрламалли:**

**Ах, сиренĕм, шур сирень,**
**Эс пире телей пилле.**

Касçхине тухап вăйăа,
Чунтанах кĕтеп сана.
Кăвак куç йăл-йăл çиçет,
Сар çӳçӳ вĕл-вĕл вĕçет.

**Хушса юрламалли**

Эсĕ çитрĕн ман ума,
Çемçен тытрăн ман алла.
Тыткăнлать кăвак куçу,
Çемçен сĕртĕнет çӳçӳ.

**Хушса юрламалли**

Иккĕн утнă ик сукмак
Пулаясчĕ пĕр сукмак.
Утаясчĕ иккĕн тан
Ĕмĕр вĕçне çитиччен.

**Хушса юрламалли**

Роза СОЛОВЬЕВА.

Çатракасси ялĕ.

## Çĕнелет Муркаш ен

Эс телейлĕ те хаваслă,
Чăваш енĕм ман – Муркаш.
Эсĕ манăн питĕ хăтлă,
Эс чăваш та пит йăваш.

Акă сан халь çитмĕл çулĕ,
Эс çуралтăн йывăрта.
Вăрçă çулĕ, сивĕ хĕлĕ,
Хуçаймарĕç Муркаша.

Хăлхара бомба сассиччĕ,
Урара – кив çăпата.
Тăхăнмалли нимĕн çукчĕ,
Çимелли – пĕр йӳç мăян.

Ак паян эс çĕтмахри пек,
Тулăх пурнăç сан умра.
Кăвак пĕлĕт, çутă çăлтăр,
Сан малашлăх – сан умра.

Улăх çӳлелле, Муркашăм,
Сана пĕлтĕр пур тĕнче.
Эп санпа ялан мухтанăп,
Улăп пек пул çĕр çинче.

Халăху пурнать пит тулăх,
Пирĕн пурнăç ешерет.
Чылаях-çке санăн пурлăх,
Упра ăна ĕмĕрех.

Е. ВАСИЛЬЕВ.

## Çуркунне

Çитсе килет çуркунне,
Хĕвел сапать шевлине.
Сăртсем, тусем хуралаççĕ,
Çырмара шывсем юхаççĕ.

Ши-ши шăхăрса
Шăнкăрч пире йыхăрать.
Вĕллешĕн хыт савăнса
Юррипе савăнтарать.

Уй-хирсем ак хуралаççĕ,
Тракторсем хире тухаççĕ.
Çур аки çитсе килет,
Хĕрӳ тапхăр пуçланать.

Д. СОКОЛОВ.

## Асрах эсĕ

Пĕвӳ яштак, кăкру тулли,
Сенкер тӳпе – куçу кулли.
Ма тыткăнларăн-ши мана?
Кĕскен калаçрăм ун чухне,
Вăтантăн эсĕ чи малтан.
Шухăш асать. Чĕре юнне
Тытса чараймăн. Кăмăлтан
Калаçрăн ăшшăн та çемçен,
Сăмах май култăн именсе.
Кăмăлу анлă та чечен –
Мĕн-ма сывлатăн пӳлĕнсе?
Кам тыткăнларĕ-ши кама?

## Гитара

Гитара, гитара, янрат эс юрра,
Пĕр вĕçĕмсĕр юхтăр кĕввӳ таврара.
Гитара, гитара, сана сар хĕрсем
Ытамлăн чĕнетчĕç юрри юхнăçем.

Сассу сан салхуллăн каять янраса
Уй-хир, вăрман урлă тусне шыраса.
Ăçта-ши çӳретĕн, савниçĕм, сас пар,
Пĕрле пурăнса чĕререн савăнар.

Юратнă гитара, чĕре туйăмне
Çĕклет туслăхра, вăратать кăмăла.
Çич хĕлĕх, çич хĕлĕх, янрат эс юрра,
Сана кăмăллаççĕ ялта, хулара.

Михаил ВИШНЕВСКИЙ.

## Эс аса килсен

Паян каллех аса эс килтĕн,
Ĕçрен тухсассăн ун чухне.
Чĕнесчĕ çеç. Анчах кам илтĕ?
Илтсен те туймĕç чĕрепе.

Кам сана лăпкĕ те кам савĕ
Ман евĕр тӳрĕ кăмăлпа?
Пулмасть пуль мансăр чун усравĕ,
Утаймăн такăр тӳр çулпа.

Папак Мишши.

## Иртнĕ пурнăç асăмра

Иртнĕ пурнăçра пулса курасчĕ
Кĕске вăхăт, темиçе кунне.
Хĕвелпе пĕрле ирпе тăрасчĕ,
Сĕт ĕçесчĕ анне сунине.

Тантăшсемпеле кĕтӳ кĕтесчĕ,
Айкашасчĕ чунăм каниччен.
Ял-йышпа пĕрле хирте ĕçлесчĕ,
Савнипе çӳресчĕ ман ирччен.

Аннепе ларса ман калаçасчĕ,
Ас илсе пулни-иртнисене,
Каçару манăн унран ыйтасчĕ
Хăш-пĕр чух кӳрентернисене.

Аттепе пĕрле пулла каясчĕ,
Ирхи шуçăм килнĕ вăхăтра,
Вăйăра каç кӳлĕм савăнасчĕ,
Уттине çуласчĕ улăхра.

Туптанса-çке юлчĕ асăнмалăх,
Асилсессĕн чунăм тăвăнать.
Пурнăç кустăрми кусать пĕр майлă,
Иртнĕ пурнăç асăмра пурнать.

## Çĕрлехи çумăр

Çĕрле кăна çилĕ епле уларĕ,
Кĕмсĕртеттерчĕ йăл та ял туса,
Хурăнсене çĕре авса лăскарĕ,
Хаяр шавларĕ çумăрĕ çуса.

Асар-писер тавралăх шиклентерчĕ,
Ыр кун текех пулассăн туйăнмасть.
Ирхи хĕвел çак туйăма пистерчĕ,
Çĕрлехи шиклĕх çук тек, курăнмасть.

Кăкăр тулли уç сывлăша туятăн,
Чунри тасалăх кăмăлпа тулать.
Çак ырлăха куçпа курса тăратăн,
Çĕрлехи çумăр асăмра юлать.

## Хаклă вĕсем

Шурăмпуç хĕрелсе палăрсассăн,
Ыйхăран тăван ял вăрансан,
Шăхличпе кĕтӳçĕ сас парсассăн
Савăнас та юрлас килет ман.

Уй-хирте тырă-пул хумхансассăн,
Вăхăтра ăшă çумăр çусан,
Ял-йышпа ĕçлемешĕн тухсассăн
Пурăнас та юрлас килет ман.

Кĕркунне пӳлме тулăх пулсассăн,
Мăшăрсем туйсенче савăнсан,
Çулсерен çемьесен йыш хушсассăн
Юратас та юрлас килет ман.

Тăван ен, тăван ял, тăван кил,
тăвансем,
Пурнăç пек питĕ хаклă вĕсем.

## Çунат пачĕ юрату мана

Эпĕ кĕтнĕ чух эсĕ тухмарăн
Шур çеçкеллĕ улмуççи айне.
Мĕншĕн-ха чĕрӳпе туймарăн
Еплерех сана юратнине.

**Хушса юрламалли:**
**Чун юрлать ман, тусăм,**
**чăн калатăп,**
**Еплерех саватăп эп сана.**
**Пулас пурнăça санпа куратăп,**
**Çунат пачĕ юрату мана.**

Тăнламарăн эсĕ е савмарăн,
Е шанмарăн туйăм хăватне.
Çуркунне те иртрĕ, эп курмарăм
Ăшшăн ман çине эс пăхнине.

**Хушса юрламалли**

Кунĕн-çĕрĕн саншăн тунсăхларăм.
Пан улмиллĕ пирĕн улмуççи.
Кĕтсе илтĕм, тухрăн эс, суймарăн,
Савнă тусăм манăн, чун уççи!

**Хушса юрламалли**

П. ВОРОБЬЕВ.

## Администрация Моргаушского района сообщает о предоставлении земельного участка

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060402:682, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Ленина, для огородничества, площадью 256 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики просит считать недействительным объявление, опубликованное в газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 25 января 2014 года № 5 (8169), по поводу предоставления земельного участка в аренду из категории «земли сельскохозяйственного назначения» для ведения сельскохозяйственного производства с кадастровым номером 21:17:080901:1417, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, площадью 232910 кв.м.


**ВНИМАНИЕ!!!**
**26 февраля в РДК с. Моргауши с 8 до 18 ч. будет проводиться ГРАНДИОЗНАЯ ЯРМАРКА-РАСПРОДАЖА зимней верхней одежды: куртки женские и пальто, куртки мужские и подростковые. Цена – 800 руб., весна – 500 руб., лыжные костюмы – 1000 руб., а также многое другое с 50% скидкой. СПЕШИТЕ!!! Количество товара ограничено.**

**«ВИКТОРИЯ – ОКНА» ИП Шишкин**
Пластиковые окна, натяжные потолки, металлические двери, жалюзи, матрасы, эковата.
Скидка на все – 40%. Тел.: 8-937-955-33-00. 6-10.




***

СТРОЙМАТЕРИАЛЫ. Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83. 9-10.

***

Продаем сено в тюках и в рулонах, пшеницу. Доставляем навоз на автомашине КамАЗ.
Тел.: 8-987-760-57-71. 1-2.




Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4 (с торца здания Дома быта).
Тел.: 62-3-80. 2-10.


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:080901:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Селюшкин Алексей Иванович, Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с. Юнга, ул. Молодежная, д. 27. Селюшкин Олег Александрович, Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с. Юнга, ул. Молодежная, д. 23.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Кольцовым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-27. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:080901:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

***

СХПК «Герой» по пятницам в с. Моргауши реализует дробленое зерно (фас., 30 кг) по цене 294 руб., кондиционные семена клевера (фас., 25 кг) по цене 2500 руб., семена люцерны (фас., 25 кг) по цене 3500 руб. Тел.: 8(83541)67-5-79, 67-5-48, 8-906-385-64-49, 8-987-578-41-04. 3-3.

***

Продаю сено в рулонах, первый укос.
Тел.: 8-961-340-55-68. 3-5.

***

Тюкланă утă сутатпăр. Тел.: 8-927-846-21-54.

***

Продается деревянный дом с кирпичным пристроем. Газ подключен. Огород 28 сот. Адрес: с. Акрамово, ул. Мира, д. 5. Цена договорная.
Тел.: 8-937-951-55-63, 8-937-374-55-72.

***

Ĕне, вăкăр, тына, пăрусем туянатпăр.
Тел.: 8-987-665-02-13. 1-3.


**Спутниковое цифровое телевидение**
ТРИКОЛОР 200 каналов – 7500 руб. 9-10.
ТЕЛЕКАРТА 50 каналов – 3500 руб.
Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30.


Мартăн 1-мĕшĕнче виççĕмĕш пăрулаМалли хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатпăр.
Тел.: 8-937-374-62-86.

***

Продаю двухкомнатную квартиру в центре с. Моргауши (подпол, гараж).
Тел.: 8-952-024-60-56, 8-903-064-97-70.

***

Продаю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши. Тел.: 8-905-197-84-84.

***

Продаю автомобиль ВАЗ-2105, в хорошем состоянии, пробег 39000 км., цвет темно-зеленый. Тел.: 8-906-131-99-24.


**Консалтинговая компания «ВИКТОРИЯ»**
* Представительство интересов в судах;
* Подготовка исков, договоров, жалоб;
* Сделки с недвижимостью, в т.ч. с земельными участками;
* Риэлторские услуги (покупка, продажа, аренда);
* Услуги по оценке недвижимости;
* Взыскание по КАСКО, ОСАГО;
* Регистрация, ликвидация организаций, ИП;
* Бухгалтерский и кадровый учет.

Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119
Тел.: 62-4-43, сот. 8-903-358-64-48
г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4а. Тел. 44-64-48
сайт: www.victoria-ooo.ru

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 1-10.

Цифровое спутниковое телевидение
ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб.
Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 4-10.

ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ.
Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 8-10.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел.: 8-927-667-40-92.** 12-23.

**21 февраля в ФСК «Сывлăх» с 8.30 час. до 16.00 час. РАСПРОДАЖА ШУБ (производство – г. Пятигорск). Можно в кредит, нужен только паспорт. Тел.: 8-987-735-40-86.**


Кашмашри Мир урамĕнче пурăнакан кӳршисем
**Антонина Андреевна ЩУКИНА**
ĕç ветеранĕ вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерессĕ.

Орининти вăтам шкул коллективĕ кунта нумай çул газооператорта ĕçленĕ
**Илья Александрович КОЧНОВ**
вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Çатракассинчи вăтам шкул коллективĕ кунта нумай çул хими тата биологи вĕрентнĕ
**Геннадий Алексеевич АЛЕКСЕЕВ**
вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркашри тĕп больница коллективĕ кунта хирурги уйрăмĕнче нумай çул санитаркăра вăй хунă
**Антонина Андреевна ЩУКИНА**
вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Правление СХПК ПЗ им. Е. Андреева выражает глубокое соболезнование родным и близким в связи с тяжелой утратой – смертью
**Валерия Петровича ОНЬКОВА.**

Муркаш райпо коллективĕ кунта товароведра ĕçлекен И.Л. Семеновăн тăван
**АШШĔ**
вилнĕ пирки çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркаш райпо коллективĕ кунта водительте ĕçлекен П.Н. Корчагинăн
**ПИЧЧĔШĔ**
вăхăтсăр вилнĕ пирки çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

## Прогноз погоды

| | среда 19 февраля | | | | четверг 20 февраля | | | | пятница 21 февраля | | | | суббота 22 февраля | | | | воскресенье 23 февраля | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | **-1** | **-1** | **-1** | **-3** | **-5** | **-3** | **-2** | **-6** | **-6** | **-5** | **-3** | **-5** | **-5** | **-6** | **-5** | **-6** | **-5** | **-3** | **-1** | **-2** |
| Давление мм | 736 | 736 | 738 | 740 | 741 | 741 | 741 | 741 | 742 | 744 | 746 | 749 | 751 | 753 | 754 | 754 | 754 | 754 | **755** | **755** |
| Влажность % | **94** | **94** | 90 | **92** | **93** | 90 | 79 | **92** | **92** | **94** | 83 | **93** | **91** | 90 | 85 | 88 | 89 | 89 | 87 | 90 |
| Ветер м/сек | 2 | 4 | 4 | 3 | 2 | 1 | 2 | 3 | 3 | 2 | 2 | 2 | 2 | 3 | 4 | 5 | 5 | 4 | 6 | 4 |
| | Ю-З | З | С-З | С-З | Ю-З | З | Ю | Ю-В | В | В | Ю-В | В | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю | Ю | Ю | Ю |
| Солнце восход / заход | | 08:07 | 18:05 | | | 08:05 | 18:07 | | | 08:02 | 18:10 | | | 08:00 | 18:12 | | | 07:57 | 18:14 | |
| Луна восход / заход | | 23:33 | 09:12 | | | - | 09:35 | | | 00:46 | 10:03 | | | 01:58 | 10:38 | | | 03:07 | 11:22 | |


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла таврăсa памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 18.02.2014 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 5074.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.